23-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1943 ЯНВАРЬ 1 ЭРНЕКУН 1(6238) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ÇĔНĔ ÇУЛ ЯЧĔПЕ САЛАМ, ЮЛТАШСЕМ!

Çĕнĕ çулти çĕнĕ çĕнтерӳсемшĕн

Пирĕн тăван çĕршыв паян çĕнĕ, пин те тăхăрçĕр хĕрĕх виççĕмĕш çула кĕрет. Совет халăхĕ хăйĕн иртнĕ çулхи çĕнтерĕвĕсене палăртса, хăйĕн умне çĕнĕ, татах та пысăкрах задачăсем лартать.

«Пирĕн государство органĕсемпе парти органĕсен ĕçĕ иртнĕ тапхăрта икĕ енĕпе пулса пычĕ: пĕр енчен, мирлĕ строительство енĕпе тата пирĕн фронт валли çирĕп тыл организацилес енĕпе, тепĕр енчен, Хĕрлĕ Çарăн оборонăллă тата наступленилле операцисене туса ирттерес енĕпе пулса пычĕ». (Сталин).

Иртнĕ çулталăкра Совет Союзĕнчи ĕççыннисем пирĕн çар промышленноçне, çавăн пекех тата граждăнла промышленноçа малалла аталантарса çĕнĕ вăйă кӳрес тĕлĕшпе, ялхуçалăхĕнче—акмалли çĕр лаптăкне малалла сарса çĕрĕн тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе, пĕтĕмĕшпе илсен фронт валли пур тĕрлĕ хатĕрсемпе продукцисем те туса парас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем турĕç.

Иртнĕ çулталăк Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту промышленноçра та, ялхуçалăхĕнче те анлăн та хăватлăн сарăлса кайшипе паллă пулса тăчĕ. Республикăри чылай промышленность предприятийĕсем, сăмахран, Бунин юлташ завод директорĕн заместителĕ, Челноков тата Володин юлташсем главнăй инженерсем пулса ĕçлекен предприятисем, Канашри вагонсем юсакан завод, Улатăрти паровозсем юсакан завод Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура чылай пысăк çитĕнӳсем туса, Хĕрлĕ ялавсемпе премисем илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Орденлă Чăваш республикин ялхуçалăхĕ те палăрмалла çитĕнӳсем турĕ, пирĕн колхозсем вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпула вăхăтра пухса кĕртсе, государство умĕнчи обязательствăсене çине тăрса пурнăçа кĕртсе пычĕç. Обществăллă выльăх-чĕрлĕхсен йышĕпе вĕсен продуктивноçне ӳстерес тĕлĕшпе республика паха утăмсем турĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи çак организаторла тата строительствăллă пĕтĕм йывăр ĕçе пурнăçа кĕртсе пынă май, пирĕн çĕршыв вăна мар, çынсем хăйсем те улшăнса çĕнелчĕç. Производствăна, унăн ертсе пырас ĕçсене пиншер çĕнĕ çынсем хутшăнса, ĕçри пĕлӳлĕхпе ăсталăха, вăрçă вăхăтĕнчи ĕç меслечĕсене вĕренсе алла илсе пычĕç. Çынсем типтерлĕрех, хастарлăрах, дисциплинăллăрах пулса тăчĕç. Тăван çĕршыв умĕнчи тата ăна фронтра хӳтĕлекенсем умĕнчи—Хĕрлĕ Çар воинĕсем умĕнчи хăйсен граждăнла тивĕçлĕхне ăнланса илнĕ çынсем фронта валли хĕçпăшал туптанă çĕрте, пирĕн паттăр воинсем валли апат-çимĕç, аш-какай, сĕт-çу тата ытти нумай тĕрлĕ продуктсем хатĕрленĕ çĕрте паха ĕç тĕслĕхĕсем кăтартаççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн тылне производствăра пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе тĕреклетсе пынипе пĕрлех, республикăри ĕççыннисем фронтри боецсем валли ăшă тумтирсем пухнипе, танксен колоннисене, самолетсен эскадрильйисене тума укçа-тенкĕ пухнипе пысăк пулăшу параççĕ. Саратов облаçĕнчи колхозник Ферапонт Головатый пуçарнă патриотла пысăк ĕç пирĕн республикăра та анлăн сарăлса кайрĕ. Халĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар валли çапăçура кирлĕ хĕçпăшал тунă çĕре аллăш-çĕршер пин тенкĕ укçа хывнă колхозниксем вуншарăн шутланаççĕ. Çак ĕç валли пĕтĕм республикипе нумай миллионшар тенкĕ укçа пухнă.

Тăван çĕршыв оборонине çĕнĕ хăват кӳрекен çак пархатарлă ĕçшĕн пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсене, çавăн пекех тата нумай пиншерĕн укçа-тенкĕ хывнă чаплă патриотсене халăхсен аслă сулпуçĕ Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав туса саламларĕ. Сулпуçăн саламлă сăмахĕ республикăри ĕççыннисене промышленноçра та, ялхуçалăхĕнче те фронтшăн татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума хавхалантарать.

Фронтпа тыл хушшинчи çыхăну иртнĕ çулта вăйланса çирĕпленчĕ. Пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар, ăна пĕтĕм совет халăхĕ пулăшса пынипе, отечественнăй вăрçă фрончĕсенче ирсĕр оккупантсен кĕтĕвĕсене хирĕç геройла çапăçса пырса, юлашки икĕ уйăх хушшинче чылай фронтсенче наступлени кусрĕ. Сталинград патĕнче, Центральнăй фронтра, Дон шывĕн вăтаçĕрти районĕнче, Нальчик районĕнче пирĕн хĕçпăшаллă вăйсем фашистсен войскисене хăватлăн пыра-пыра çапрĕç.

Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чыслăхне, унăн никама пăхăнманлăхне геройла çапăçса хӳтĕлекен паттăрсен ретĕнче пирĕн чăваш халăхĕн ывăлĕсем те Хĕрлĕ Çар воинĕн тивĕçлĕхне, орденлă тăван республикăн ятне çӳлте тытса пычĕç. Иртнĕ 1942 çулта Чăваш республикинче ӳссе çитĕннĕ тăватă юлташ—Мирон Ефимов, Борис Васильев, Федот Орлов, Геннадий Габайдулин Совет Союз Геройĕн ятне илчĕç. Чăваш халăхĕн ывăлĕсенчен темиçе çĕршер çынна Совет Правительстви орденсемпе тата медальсемпе наградăларĕ.

Пирĕн наступленин хăвачĕ фронтра та, тылра та кунран кун ӳссе пырать. Çавăн пекех пирĕн Совет Союзĕн пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăвĕ, унăн пĕтĕм тĕнчери туслă çыхăнăвĕсем татах та ытларах аталанса çирĕпленчĕç. Совет Союзĕпе Англи тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен боевой союзĕ тĕнĕл держависен коалицине ытларах та ытларах хĕссе, халсăрлатса пырать.

Хальхи вăхăтри пĕтĕм обстановка эпир çак юнлă вăрçăра гитлерла çынçиенсен кĕтĕвĕсене çĕнтерессе çинчен калать. Пирĕн çĕнтерĕвĕн шанчăкĕ вăл—геройла Хĕрлĕ Çарăн наступленилле хăвачĕ кунран кун ӳссе пыни, Хĕрлĕ Çарăн тылĕ ытларах та ытларах тĕрекленсе пыни, пирĕн çĕршывăн çĕнтерӳллĕ вăйĕсене аслă полководец Сталин юлташ ертсе пыни пулса тăрать.

Çĕнтерӳ праçникне хăвăртрах çывхартас тесен, пирĕн фронтра та, тылра та пĕтĕм вăя хурса, кирлĕ пулсан, пурнăçа парса татах та хăватлăнрах кĕрешмелле, фашистла захватчиксен çарĕсене татах та вăйлăнрах аркатса пымалла. Пирĕн фабрикăсемпе заводсен ĕçне темиçе хут ытларах вăйлатмалла, Хĕрлĕ Çара танксем, самолетсем, тупăсем, пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем, фронтпа çĕршыв валли—апат-çимĕçпе чĕр таварсем татти-сыпписĕр парса тăмалла. Пĕтĕм çĕршыв тăшман çине вăйлă наступлени туса пынă чухне пирĕн юлса пыракан участоксем пулмалла мар. Промышленность тата ялхуçалăхĕ ытлăн-çитлĕн туса кăларакан продукцие вăхăтра фронта çитерес тесен, пирĕн транспортăн хăйĕн ĕçне нумай лайăхлатмалла. Транспорт хальхи вăхăтра сехет механизмĕ пек ĕçлеме тивĕçлĕ. Пурне те перекетлесси—производствăн пур отраслĕсенче те вăрçă вăхăтĕнчи çирĕп закон пулса тăма тивĕçлĕ. Пире хамăр умри историллĕ аслă задачăсене пурнăçа кĕртме вăрçă вăхăтĕнчи хурçă пек çирĕп дисциплина, большевикла йĕркелĕх, типтерлĕх, революцилле сыхăлăхпа тимлĕх кирлĕ.

Çĕнĕ çулăн ялавĕ çине эпир çак аслă кĕрешӳре çĕнтерессе çинчен калакан сăмахсене çырса хунă. Çав ялава çӳле тытса, пирĕн хĕçпăшаллă вăйсен полкĕсем малалла, хĕвеланăçнелле наступлени туса пыраççĕ. Вĕсене аслă полководец Сталин юлташ ертсе пырать. Эпир тискер кайăкла нимĕç империализмĕн çарĕсене çапса аркататпăр, хамăрăн аслă çĕршыв талккишĕсене фашистла ирсĕрсенчен тасататпăр, ирĕке кăларнă хуласемпе ялсем çине çĕнтерӳ ялавне—пирĕн аслă Хĕрлĕ Ялава ĕмĕрлĕхех çирĕплетсе лартатпăр.

Ӳкерчĕк çинче: Н-ски заводри стахановецсем В. Ф. Федорова И. А. Андреев юлташсем. Фронт ыйтнă пек ĕçлекен ĕçĕшĕн вĕсенчен В. Ф. Федоров юлташа (сулахайра)—«За трудовое отличие» медальпе, И. А. Андреев юлташа (сылтăмра)—«Знак почета» орденпа наградланă.

Пирĕн войскăсем Сталинград патĕнче ултă эрне хушшинче тунă наступленин итогĕсем

1942 çулти сентябрь уйăхĕн варринче нимĕçсен фашистла войскисене Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче тытса чарнă. Вăрçă ĕçĕсем çакна кăтартса панă: Совет Союзне Европăри пайне Атăлпа Уралри тылран татса илес, Москва хупăрласа тытса илес тĕллевпе нимĕçсен командованийĕ тунă стратегилле план пушă ăпăла пулса тăнă, ăна хăйсен чăн-чăн вăйĕсене тата совет резервĕсене шута илмесĕр тунă пулнă.

Нимĕçсен фашистла войскисене Сталинград патĕнче çавăрса илсе пĕтерсе тăкас тĕллевпе Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй главнокомандованийĕ тунă стратегилле план тăшмана хăватлăн çыхăнса тăракан план пулса тăчĕ.

Çак плана пирĕн войскăсем 1942 çулти ноябрь—декабрь уйăхĕсенче виçĕ тапхăр хушшинче пурнăçа кĕртрĕç.

I. Пĕрремĕш тапхăр—пирĕн войскăсем Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре наступлени туни

Хĕрлĕ Çар ноябрĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа Кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи, Дон шывĕ патĕнчи тата Сталинградри фронтсен вăйĕсемпе наступлени кусрĕ те тăшмана хăватлăн пырса çапрĕ.

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре çапăçакан совет войскисем умне Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй главнокомандованийĕ çакăн пек тĕллев лартнă: нимĕçсен фашистла войскисен Сталинград патĕнчи флангри группировкисене çĕмĕрсе тăкмалла тата хупăрласа пырса тăшман çарĕн Сталинград патĕнче вырнаçнă соединенийĕсен тĕп массине çавăрса илмелле. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсемпе унăн командирĕсен составĕ пултаруллăн кĕрешнине пула, çак тĕллеве ăнăçлăнах пурнăça кĕртнĕ.

Наступлени тунă вăхăтра пирĕн войскăсем противникăн çак соединенийĕсене аркатса тăкрĕç: румынсен 1, 2, 5, 6, 9, 13, 14, 15-мĕш пехотнăй дивизийĕсене, румынсен 7-мĕш кавалерийски тата 1-мĕш танковăй дивизийĕсене, нимĕçсен 44, 376, 384-мĕш пехотнăй тата 22-мĕш танковăй дивизийĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Кунсăр пуçне, нимĕçсен виçĕ пехотнăй дивизине йывăр çухатусем тӳстернĕ. Çак çапăçусенче пирĕн войскăсем противникăн 95.000 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă тата 72.400 çынна тыткăна илнĕ. Пирĕн чаçсем питех те нумай трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче: самолетсем — 134, танксем — 1.792, орудисем—2.232, автомашинăсем—7.306, çавăн пекех тата минометсем, пулеметсем, автоматсем, противотанковăй пăшалсем, боеприпассемпе ытти çар пурлăхĕн склачĕсене нумай тытса илнĕ.

Çак вăхăт хушшинчех пирĕн войскăсем 826 самолет, 548 танк, 1.934 оруди, 3.190 автомашина тата нумай çар пурлăхне пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн войскăсем Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре наступлени тунă вăхăтра Хĕрлĕ Çар 70—150 километр малалла кайрĕ тата халăх пурăнакан 213 пункта ирĕке кăларчĕ.

Пирĕн войскăсем Сталинград районĕнче ăнăçлăн шăтарса кĕрсе кайнине тата наступлени тунине пула, нимĕç войскисен çак соединенийĕсемпе чаçĕсене хупăрласа илнĕ: нимĕçсен 14, 16 тата 24-мĕш танковăй дивизийĕсем, нимĕçсен 3, 29 тата 60-мĕш моторизованнăй дивизийĕсем, нимĕçсен 71, 76, 79, 94, 100, 113, 197, 295, 305, 371, 389-мĕш тата румынсен 20-мĕш пехотнăй дивизийĕсем, румынсен 1-мĕш кавалери дивизийĕ тата пирĕн войскăсем Сталинград районĕнче наступлени тунă чухне аркатса тăкнă нимĕçсен 44, 376, 384-мĕш пехотнăй дивизийĕсен юлашкийĕсем, Кунсăр пуçне, нимĕç çарĕн главнокомандованийĕн резервĕнчи 44, 46 тата 61-мĕш артиллерийски полксене, 12, 25, 37, 104-мĕш зенитнăй полксене, 53-мĕш минометнăй полка, 50, 162, 294, 336-мĕш уйрăм сапернăй батальонсене çавăрса илнĕ.

Совет войскисем Сталинград патĕнче тунă наступленин пĕрремĕш тапхăрĕнчи çапăçусен итогĕсем çакăн пек ĕнтĕ.

II. Иккĕмĕш тапхăр—пирĕн войскăсем Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра наступлени туни

Сталинград патĕнче нимĕçсен фашистла войскисене çавăрса илсен, çапла вара Верховнăй главнокомандовани лартнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсен, Хĕрлĕ Çар декабрĕн 16-мĕшĕпе 30-мĕшĕ хушшинче тăшмана Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра çĕнĕрен вăйлăн пырса çапрĕ.

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра наступлени тăвакан совет войскисем умне Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй главнокомандованийĕ çакăн пек тĕллев лартнă пулнă: противникăн оборонине Новая Калитва—Монастырщина районĕнче татмалла, Дон шывĕн пысăк кукăрĕнче кĕрешекен нимĕçсен фашистла çарĕсен тылне пырса тухмалла тата тăшманăн Сталинград патĕнче çавăрса илнĕ войскисене çав ункăран тухма е вĕсене тулашĕнчен пулăшма памалла мар. Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра тăвакан наступленин тĕллевне Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсемпе командăй составĕ пултаруллă кĕршсе пĕтĕмпех пурнăçа кĕртнĕ.

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра çапăçма тытăннăранпа Хĕрлĕ Çар 150—200 километр малалла кайнă. Халăх пурăнакан 1.246 пункта ирĕке кăларнă. Пирĕн войскăсем наступлени туса противникăн çак соединенийĕсене çапса аркатнă: нимĕçсен 62-мĕш, 294-мĕш, 298-мĕш, 306-мĕш, 385-мĕш дивизийĕсене, 11-мĕш танковăй дивизине, итальянецсен çак пехотнăй дивизийĕсене: «Ровенна» ятлă 3-мĕш дивизине, «Челере» ятлă 3-мĕш дивизине, «Кассерия» ятлă 5-мĕш дивизине, «Сфорцесско» ятлă 2-мĕш дивизине, «Пасубио» ятлă 9-мĕш дивизине, «Торино» ятлă 52-мĕш дивизине, чернорубашечниксен 1-ш бригадине тата румынсен 7-мĕшпе 11-мĕш пехотнăй дивизийĕсене аркатса тăкнă. Кунсăр пуçне, противникăн 4 дивизине пысăк çухатусем тӳстернĕ. Çав çапăçусенче тăшманăн 59.000 çын пĕтнĕ; противникăн 60.050 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Совет войскисем питĕ йышлă трофейăсем тытса илнĕ, çав трофейăсем хушшинче 368 самолет, 178 танк, 1.927 оруди, 7.414 автомашина пур, çавăн пекех тата минометсем, пулеметсем, автоматсем, противотанковăй пăшалсем, боеприпассем тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай.

Кунсăр пуçне, пирĕн войскăсем çакăн чухлĕ пĕтерсе тăкнă: самолетсем—117, танксем—172, орудисем—268, автомашинăсем—1000 ытла тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем пĕтерсе тăкнă.

Сталинград патĕнче совет войскисем наступлени тунин иккĕмĕш тапхăрĕнчи çапăçусен итогĕсем çакăн пек ĕнтĕ.

III. Виççĕмĕш тапхăр—пирĕн войскăсем Сталинградран кăнтăралларахра наступлени туни

Нимĕç командованийĕ, хăйĕн войскисене Сталинград патĕнче тăкăрлăка кĕртсе ярса катастрофа умне пырса тăратсан, Сталинград патĕнче Хĕрлĕ Çар çавăрса илнĕ çав войскăсене çăлас тесе вара питĕ хытă тăрăшнă. Çак шутпа противник Котельниковăран çурçĕреллерехри районра войскăсен пысăк группировкине пухса тăратнă та декабрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн чаçсене хирĕç наступленилле çапăçусем пуçласа янă.

Сталинградран кăнтăралларахра кĕрешекен совет войскисем умне Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй главнокомандованийĕ çакăн пек задача лартнă: тăшман войскисен çĕнĕ ударнăй группировкине аркатса тăкмалла, нимĕçсене кăнтăралла хăваласа ямалла, çапла вара вĕсене Сталинград патĕнче çавăрса илнĕ хăйсен дивизийĕсем патне шăтарса кĕме чарса лартмалла.

Çак тĕллеве пирĕн войскăсем Сталинградран кăнтăралларахра наступлени тунин виççĕмĕш тапхăрĕнче пурнăçа кĕртнĕ.

Сталинградран кăнтăралларахри районра наступлени тума пуçланăранпа пирĕн войскăсем 100—150 километр малалла кайнă тата халăх пурăнакан 130 пункта ытла ирĕке кăларнă. Декабрĕн 12-мĕшĕпе 30-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче пирĕн войскăсем нимĕçсен 6-мĕш, 17-мĕш, 23-мĕш танковăй дивизийĕсене тата 16-мĕш моторизованнăй дивизине, 4-мĕшпе 18-мĕш пехотнăй дивизийĕсене тата румынсен 5-мĕшпе 8-мĕш кавалерийски дивизийĕсене аркатса тăкнă. Нимĕçсен фашистла войскисен 21.000 çын пĕтнĕ. Противникăн 5.200 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Пирĕн войскăсем тытса илнĕ йышлă трофейăсем хушшинче çаксем пур: самолетсем—40, танксем—94, орудисем—292, автомашинăсем—329 тата хĕçпăшалсем, унтан авиаципе танк пурлăхĕсем нумай.

Çапăçусем вăхăтĕнче пирĕн войскăсем пĕтерсе тăкнă: самолетсем—306, танксем—467, орудисем—257, автомашинăсем—945 тата ытти нумай тĕрлĕ çар пурлăхĕсем.

Совет войскисем наступлени туса пынин виççĕмĕш тапхăрĕнчи çапăçусен итогĕсем çакăн пек ĕнтĕ.

Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй главнокомандованийĕ нимĕçсен фашистла войскисене Сталинград патĕнче çавăрса илсе пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе тунă плана виççĕмĕш тапхăрта çакăн пек пурнăçа кĕртнĕ.

* * *

Сталинград патĕнчи ултă эрне хушшинчи çапăçусенче пирĕн войскăсем халăх пурăнакан 1.589 пункта нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. 1942 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа наступлени тунă вăхăтра Хĕрлĕ Çар, Сталинград районĕнче противникăн 22 дивизине тачă ункăпа çавăрса илсе, питех те йывăр операцие кĕске вăхăт хушшинче туса ирттерчĕ. Хĕрлĕ Çар 36 дивизие, вĕсенчен 6 танковăй дивизие, пĕтĕмĕшпех çапса аркатрĕ тата противникăн 7 дивизине йывăр çухатусем кӳчĕ. Çав тапхăрта нимĕçсен фашистла войскисен 175.000 салтакĕпе офицерĕ вилсе пĕтнĕ; пирĕн войскăсем противникăн 137.650 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Пирĕн войскăсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: самолетсем—542, танксем—2.064, орудисем—4.451, минометсем—2.734, пулеметсем—8.161, автоматсем—15.954, противотанковăй пăшалсем—3.703, винтовкăсем—137.850, снарядсем—5 миллион ытла, патронсем—50 миллион ытла, вагонсем—2.120, паровозсем-46, боеприпассемпе хĕçпăшалсен тата продовольствин склачĕсем—434, автомашинăсем—15.039, лашасем—15.783, мотоциклсем—3.228 тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех пирĕн войскăсем нимĕçсенне пĕтерсе тăкнă: самолетсем—1.249, танксем—1.187, орудисем—1.459, минометсем—755, пулеметсем—2.708, автомашинăсем—5.135 тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай пĕтерсе тăкнă.

Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй главнокомандованийĕ противникăн Сталинград патĕнчи войскăсен группировкине аркатса тăкас тата çавăрса илес тĕлĕшпе тунă плана кăнтăр-хĕвеланăç фрончĕн командующийĕ генерал-полковник Н. Ф. ВАТУТИН, Сталинград фрончĕн командующийĕ генерал-полковник А. И. ЕРЕМЕНКО, Дон фрончĕн командующийĕ генерал-лейтенант К. К. РОКОССОВСКИЙ, Воронеж фрончĕн командующийĕ генерал-лейтенант Ф. И. ГОЛИКОВ командир пулса ертсе пынипе, Верховнăй главнокомандовани ставкин представителĕсем арми генералĕ Г. К. ЖУКОВ, генерал-полковник А. М. ВАСИЛЕВСКИЙ, артиллерин генерал-полковникĕ Н. Н. ВОРОНОВ пĕтĕмĕшлĕн ертсе пынипе пурнăçа кĕртсе пынă.

Çапăçусенче генерал-лейтенант П. И. БАТОВĂН, генерал-лейтенант В. И. КУЗНЕЦОВĂН, генерал-лейтенант Д. Д. ЛЕЛЮШЕНКĂН, генерал-лейтенант Р. Я. МАЛИНОВСКИН, генерал-лейтенант М. М. ПОПОВĂН, генерал-лейтенант П. Л. РОМАНЕНКĂН, генерал-майор И. М. ЧИСТЯКОВĂН, генерал-майор Ф. И. ТОЛБУХИНĂН, генерал-майор Н. И. ТРУФАНОВĂН, генерал-лейтенант Ф. М. ХАРИТОНОВĂН войскисем уйрăмах палăрнă.

Кунсăр пуçне, çапăçусенче танковăй войскăсен генерал-лейтенанчĕ В. М. БАДАНОВ, танковăй войскăсен генерал-лейтенанчĕ П. А. РОТМИСТРОВ, генерал-майор И. Н. РУССИЯНОВ, танковăй войскăсен генерал-майорĕ В. Т. ВОЛЬСКИЙ, танковăй войскăсен генерал-майорĕ П. П. ПОЛУБОЯРОВ, танковăй войскăсен генерал-майорĕ П. П. ПАВЛОВ, танковăй войскăсен генерал-майорĕ А. Г. РОДИН, танковăй войскăсен генерал-майорĕ В. В. БУТКОВ, танковăй войскăсен генерал-майорĕ Т. И. ТАНАСЧИШИН, генерал-майор М. В. ВОЛКОВ, генерал-майор К. В. СВИРИДОВ командир пулса ертсе пыракан танковăй тата механизированнăй корпуссем уйрăмах палăрнă.

Совет войскисене Сталинград патĕнче çитĕнӳсем тума авиаци генерал-майорĕн С. А. КРАСОВСКИН, авиаци генерал-майорĕн Т. Т. ХРЮКИНĂН, авиаци генерал-майорĕн Л. Г. РУДЕНКĂН авиасоединенийĕсем, Верховнăй главнокомандованийĕн представителĕсем авиаци генерал-лейтенанчĕ А. А. НОВИКОВ тата авиаци генерал-лейтенанчĕ Ф. Я. ФАЛАЛЕЕВ пĕтĕмĕшлĕн ертсе пынипе кĕрешенĕскерсем, пулăшса пынă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Чăваш АССР-ĕнчи Улатăр районĕнчи „Красный луч“ колхоз

Андрей Михайлович САРСКОВА

Сире, Андрей Михайлович, Хĕрлĕ Çарăн сывлăшри вăйĕсемшĕн тăрăшнăшăн хамран салам калатăп тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тăватăп.

И. СТАЛИН.

Эсир ыйтнине пурнăçа кĕртĕпĕр.

ВКП(б) Улатăр райкомĕн секретарьне КИРЕЕВ юлташа

Улатăр районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене, танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа пухнăскерсене, манран тăванлă салам калăр тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тăвăр.

И. СТАЛИН.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Декабрĕн 31-мĕшĕнче пирĕн войскăсем ОБЛИВСКАЯ хулипе чугунçул станцине тата НИЖНЕ-ЧИРСКАЯ, ПРИЮТНОЕ ятлă район центрĕсене йышăнса илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Трофейăсем хушшинче самолетсем тиенĕ эшелон пур. Трофейăсене шута илеççĕ.

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пыраççĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Район 2.901.000 тенкĕ пухнă

ПАРАЧКАВ, декабрĕн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар валли боевой машинăсем тума укçа хывас ĕç районра сарăлнăçемĕн сарăлса пырать. Çулпуçăн саламлă телеграммисене илнĕ хыççăн çак ĕç татах та хăвăртланчĕ. Паянхи кун тĕлне танксемпе самолетсем тума пурĕ 2.901.000 тенкĕ укçа пухнă.

А. РОМАНОВ, ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Çĕнĕ çула çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕç

ÇĔМЕРЛЕ, декабрĕн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Çĕнĕ çула çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленсе, комбинатри малта пыракан цехсем декабрь уйăхĕнчи плана срокчен тултарчĕç. Н. Балашовпа И. Шутников юлташсен ертсе пыракан цехсем декабрĕн юлашки икĕ кунĕнче уйăхри заданирен ирттерсе продукци туса кăларчĕç.

Декабрь уйăхĕнче комбинатри чылай рабочисем пысăк тухăçлăхпа ĕçлерĕç. Шутников цехĕнчи стахановец Н. Гордеев юлташ нормăна кашни кун 5—6 хут ирттерсе тултарчĕ. Уйăхри нормăна çавăн пекех стахановец К. Яксон 326 процент, Соколов — 275 процент тултарнă. Балашов цехĕнчи М. Сыромятникова, К. Клыгова, Е. Иванова, М. Лаптева, А. Григорьев, С. Леонтьев тата О. Шапошникова рабочисемпе работницăсен ĕç тухăçлăхĕ те нормăран 2—3 хут пысăкрах, М. Цымуловăпа Е. Беляева сборщицăсем вара нормăран 4 хут тухăçлărах ĕçлене.

Çак кунсенче Шутников юлташ ертсе пыракан цехри рабочисен, служащисен тата инженерла-техникла работниксен производствăллă канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура пулнисем производствăри культурăлăх, тасалăхпа йĕркелĕх çинчен сӳтсе-явса ку тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине татăклăн палăртрĕç. Инструментсем хумалли ещĕксем кашни рабочи валлиех тума пулчĕç, кашни стахановец 2 çамрăк рабочие инструментсене хăйрама вĕрентме обязательство илчĕ.

Халĕ çак вырăнлă пуçарăва ытти цехсенче те сараççĕ.

К. ДМИТРИЕВ,
Комбинатри завком председателĕ.

Çулталăкри планран ирттерсе 380 пин тенкĕлĕх продукци

ВĂРМАР, декабрĕн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Пирĕн фабрика коллективĕ çĕнĕ 1943 çула иртнĕ çулти ĕçсен планне 158 процент, декабрьти задание 160 процент тултарнипе паллă тăвать. Фабрика иртнĕ çулти планран ирттерсе 380 пин тенкĕлĕх продукци пачĕ. Çак çитĕнĕве эпир Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура тимлĕн ĕçлесе турăмăр.

Çĕршывпа фронт заказĕсене пурне те вăхăтра тăвассишĕн тăрăшса, пирĕн рабочисемпе работницăсем ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пычĕç. Сăмахран, декабрь уйăхĕнчи нормăна П. Данилова, А. Кириллова, А. Федорова тата С. Терентьева работницăсем 2-шер хут ытла ирттерсе тултарчĕç. К. Матвеевăпа А. Семенова стахановкăсем вара нормăран 3-шер хут тухăçлăрах ĕçлерĕç.

И. ГОРБУНОВ,
Фабрика директорĕ.

Хуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ

Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕн Шупашкарти апат-çимĕç комбиначĕ (управляющийĕ Е. Люминарская юлташ) кăçалхи хуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ. Комбинат çулталăкри плана 115,6 процент, декабрьти задание 142 процент тултарчĕ, планран ирттерсе темиçе вуншар пин тенкĕлĕх продукци пачĕ.

Комбинат иртнĕ 1942 çулта, тĕпрен илсен, çĕршыв ыйтнине тивĕçтерсе ĕçлерĕ: хăйĕн производство планĕсене февраль уйăхĕнчен пуçласа ирттерсе тултарса, продукци туса кăларассине уйăхран уйăха ӳстерсе пычĕ. Пĕр декабрь уйăхĕнче кăна апат-çимĕç продукчĕсем 16.346 тенкĕлĕх пачĕ. Уйăхри заданисене пур ассортиментсем тăрăх та тенĕ пекех ирттерсе тултарнă.

Комбинатăн ĕçри ăнăçлăхĕ ушти бригадăсемпе работниксем хăйсен халăх умĕнчи тивĕçне туйса ĕçленинчен килет. Уйăхри ĕçсен итогĕсем тăрăх премĕсем тăвакан цехри А. Инаевăпа А. Калисова юлташсен бригадисем малта пыраççĕ. Вăл бригадăсем декабрьти ĕç нормине 140 процент ытла тултарнă. Конфетсем тăвакан цехри К. Попова ертсе пыракан бригада та вĕсенчен юлмасть: унăн кулленхи ĕç тухăçлăхĕ нормăран 30—35 процент ытларах шутланать. Ку бригадăри В. Вдовина тата Инаева бригадирччи Потатуева юлташсем — комбинатри чи тухăçлă та лайăх ĕçлекен стахановкăсем. Работница А. Фадеева юлташ та хăйĕн ĕçне тĕплĕн вĕренсе çитсе нормăна 200—250 процент тултарма пуçларĕ.

Анчах комбинатăн ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Уйрăмах кунта чĕртавара, вутта тата ытти япаласене те перекетлес тĕлĕшпе ултăну тумалла. Чĕртавара нормăпа шайлă расходлама çеç вĕренсе çитнĕ, перекетлени çук, вутта вара типтерсĕр тыткалаççĕ.

Шупашкарти апат-çимĕç комбиначĕ Канашри апат-çимĕç комбиначĕпе ăмăртать. 1942 çул иртрĕ, анчах ăмăрту договорне тĕплĕн пĕрре те тĕрĕслемен-ха. Çакăн çинчен ăмăрту арбитрĕ — апат-çимĕç халăх комиссариачĕ те манса кайнă.

Т. ИВАНОВ.

— **Укерчĕк çинче: Старши лейтенант И. Милостивенко (сулахайри).** Пирĕн земляк—Совет Союзĕн Геройĕ капитан Ф. Орлов самолечĕ çинче Милостивенко юлташ штурман пулса тăрать. Вăл пĕтĕмпе 136 боевой вĕçевре пулнă. Унăн ĕçне Ф. Орлов юлташ хăйĕн паянхи очеркĕнче лайăх енĕпе палăртса çырать. Правительство Милостивенко юлташа икĕ орденпа наградăланă.

В. М. Стрельцов (сылтăмри). Вăл Советски районри Анат-Сăнар ялĕнчи «Çĕнĕ çул» колхозран. Фронтри паттăр ĕçсемшĕн правительство ăна «За боевые заслуги» медальпе наградăланă.

Пирĕн землякçем

Юлашки вăхăтри икĕ вĕçев

Разведка халăх пурăнакан пĕр пунктра нимĕçсен боеприпассемпе бензин склачĕсем пуррине пĕлтерчĕ. Пирĕн экипажа çав складсене бомбăсем пăрахса аркатма приказ пачĕç.

Уйăхлă çутă каç. Ку вĕçевре ман штурман Каницев юлташ пулчĕ. Вăл тĕрĕс çул кăтартса пычĕ. Тĕллев патне çитесси 5—6 минута юлсан, çутатакан ракета пăрахрăмăр.

Сигнал хăми çинче лампочка çутăлать. Ку вăл сылтăмалла пăрăнмаллине пĕлтерекен сигнал. Тепĕр темиçе секундăран татах лампочка çутăлать—тӳрех вĕçмелле. Штурман йывăр бомбăсем вĕçертсе ячĕ. Эпĕ самолета çавăртăм та тĕллев çине иккĕмĕш хут кĕме тытăнтăм. Аялта çулăм ялкăшать. Бомбăсем бензин пичкисем çине е боеприпассен складне лекнĕ пулмалла.

Халь ĕнтĕ штурманшăн тĕллеме ансатрах—малтан пăрахнă бомбăсенчен тухнă пушар лайăх ориентир пулса тăчĕ. Аялалла бомбăсен иккĕмĕш ушкăнĕ вăркăнчĕ.

Иккĕмĕш хут вĕçсе кайма тухсан, ял патне çитиччен нумай аякран пушар ялкăшнине куртăмăр. Эпĕ самолета тӳрех çав çутă тĕлне тытрăм. 1.200 метр çӳлĕшĕнчен тĕллев çине пĕрремĕш хут, унтан—иккĕмĕш, виççĕмĕш хут вĕçевĕçе кĕтĕм. Бомбăсене пĕтĕмпех пăрахса пĕтертĕмĕр. Пĕрре çавăрăнса илтĕм те аялалла пăхрăм: çĕр çинче çулăм ялкăшать, складсем çунаççĕ.

Вĕçевсем ăнăçлă пулчĕç. Нумай мар вăхăтран çĕр çинчи войскăсенчен штаба эпир тĕллеве ăнăçлăн аркатнине çирĕплетсе паракан тепĕр хыпар килчĕ. Пирĕн пехотинецсем нимĕçсен унтерофицерне тыткăна илнĕ. Вăл çав каçхине К. ялĕнче пулнă. Фашистсем унтерĕ дневник çырса пынă. Акă мĕн çырса хунă вăл хăйĕн дневникĕнче:

«... Вырăссен тăватă моторлă бомбардировщикĕ ял çине ушкăнĕ-ушкăнĕпе бомбăсем пăрахрĕ, бензин тиенĕ автомашина çине тĕлех лектерчĕ. Çывăхри çуртсем çунма тытăнчĕç. Эп вырнаçнă çурт та çунать... Эпĕ урайне ӳкрĕм. Вырăссем çине-çинех атакăлама тытăнчĕç, мĕншĕн тесен вĕсемшĕн ялти пушар лайăх тĕллев пулчĕ. Çавна тӳссе тăма май килмерĕ. Кăшт лăпланнă пек пулнă самантпа усă курса ялтан аяккарах тарса выртрăм. Боеприпассен ещĕкĕсем çурăлнипе осколоксем сирпĕнеççĕ. Пĕтĕмпех çунать»...

Эпĕ унччен вăрçă пуçланăранпа 142 вĕçев тунăччĕ, çак икĕ вĕçевпе вара 144 вĕçев пулчĕ. Бомбăсем ăнăçлăн пăрахнă çĕрте манăн штурман пысăк пулăшу парать. Манпа пĕрле штурман пулса пуринчен ытларах старши лейтенант И. Милостивенко вĕçет. Вăл ĕнтĕ 136 вĕçев тунă та.

Эпир штурманпа килĕштерсе ĕçлетпĕр. Тĕллев çине çитсессĕн эпĕ унăн сигналĕсене çирĕп пурнăçа кĕртсе пыратăп, хамăн самолета кирлĕ пек çавăрса штурмана тӳрĕ тĕллесе пеме май туса паратăп.

Совет Союзĕн Геройĕ
капитан Ф. ОРЛОВ.

Фронтри пек хĕрӳ ĕçре

Эпĕ мĕн ачаранах предприятире ĕçleme ĕмĕтленнĕ. Сталинла пилĕкçуллăхсенче заводсемпе фабрикăсем хамăр республикăрах шăтса ӳсрĕç. Çавăн пек çĕнĕ заводсенчен пĕрне эпĕ те ĕçleme кĕтĕм. Малтанах завод строительствинче ахаль рабочи пулса ĕçлерĕм. Манпа пĕрле чăваш ачисем татах та пурччĕ. Каннă вăхăтсенче эпир вĕсемпе квалификациллĕ рабочи пуласси çинчен канашлаттăмăр, камăн мĕнле ĕçе вĕренес килни пирки калаçаттăмăр.

Манăн станокпа ĕçлес килетчĕ. Мĕншĕн тесен пĕр станокпа ĕçлеме вĕренсе çитсен, темиçе станокпа та ĕçлеме пулать, ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыма пулать.

Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитрĕ. Эпĕ заводăн пĕр мастерскойĕнчи станоксене вĕренме çӳреме пуçларăм.

Тăрăшни пурне те тума пулăшать. Эпĕ те тăрăшса вĕренсе, станокпа ĕçлеме часах хăнăхса çитрĕм, практикăна начар мар ирттертĕм. Вуншар чăваш ачисемпе хĕрĕсем завод ĕçне ман пекех вĕренсе пычĕç.

Мана Хĕрлĕ Çар валли продукци тума телей тиврĕ. Вăрçă тухачченех эпĕ тăван çĕршывшăн, унăн ирĕклĕхĕшĕн ĕçленине ăнланаттăм. Вăрçă хыççăн çак туйăм татах та вăйланчĕ. Нимĕç фашисчĕсене вилĕм кӳрекен продукци туни мана кунран кун тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарса пычĕ. Эпĕ ĕçĕн пур «секречĕсене» те вĕренсе çитрĕм, хамăн профессин ăстаçи пулса тăтăм: икĕ станокпа ĕçленĕскер, тăватă станокпа ĕçлеме пуçларăм.

1941 çулхи кĕркунне пирĕн çĕршывшăн йывăр вăхăт пулчĕ. Тăшман Мускав патне çывхарса пыратчĕ. Çак вăхăтра эпĕ хамăн çĕршыв умĕнчи вырăна татах ниттĕртерех туйрăм, фронт ыйтни çине ответлесе, малтан 6 станокпа, унтан 8 станокпа ĕçлеме пуçларăм. Икĕ сыншăп ĕçлени, сменăри норма кулленех вăтамран 2 хут ирттерсе тултарни мана пысăк савăнăç кӳрет.

Ĕçри çитĕнӳсене кура, мана 1942 çулта коммунистсен парти ретне илчĕç.

Партипе правительство манăн стахановла ĕçе тивĕçлипе хакларĕç. СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх мана «Знак почета» орденĕ парса наградăларĕç. Коммунистсен партийĕн ретне кĕни тата Совет Союз Правительствин наградине илни мана татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума хушать.

Иртнĕ 1942 çул маншăн асран кайми çул пулчĕ. Çĕнĕ 1943 çул çĕршыва çĕнĕ мухтав кӳрекен çул пултăр!

Орденоносец НИКОЛАЙ ПЕТРОВ.
Н-ски завод.

Уйăхри плана срокра тултарчĕ

Шупашкарти ликерпа эрех заводĕ (директорĕ Г. Фройман юлташ) 1942 çулхи производство планĕсене уйăхран уйăха ăнăçлăн тултарса пычĕ. Декабрьте те задание срокра пурнăçа кĕртрĕ. Уйрăмах цех начальникĕсем Пегасовăпа Малышева, работницăсем Андреева, Морозова, Малькова, Александрова, Мендрюкова юлташсем ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартнине палăртмалла. Вĕсем кирек-мĕнле ĕçе те вăрçă вăхăтĕ ыйтнă пек хăвăрт та тĕплĕн тăваççĕ. Кочегар Копылина рабочи Воротников юлташсем те яланах нормăна пăхнинчен тухăçлăрах ĕçлеççĕ.

Ĕ м ĕ т

Юлташ!
Çак хĕрĕх виççĕмĕш çулта
Ан пултăрччĕ фашист сăмах:
Çул варринче
   е вĕçĕнче
Тĕп пултăрччĕ йăлтах!
Манар вăл сăмаха,
            манар!
Аса килсессĕн те —
шăла çыртса кăна калар.
Вăл ӳчĕпех пытантăр çĕр айне,
Хурт çисе ятăр шăммине,
Хĕлхем çулатăр хĕресне,
Çил шăлса кайтăр ун кĕлне.

Хирти танксен шăмми-шакки,
Фашистăн çĕлĕкĕ — каски
Шăрантăр усăллă хурçа.
Çич çул ачи шит! шăхăрса
Шакăрккасем пуçтартăр тĕлĕнсе,
Васкатăр музее хĕпĕртесе.

Канса сывлатăрччĕ уйхир,
Пуç устăр пăхăр вир,
Кашлатăр кĕмĕл тулă,
Ырашĕ ылттăн хумлăн
Хумхантăр Латвимĕр таран.
Карпат таран
   сшер эреш çаран!

Ешне тулли сĕрлетĕр хурт.
Шетник тулли вĕретĕр пыл сăра.
Хăни-вĕрли пуçтарăнтăр,
   Кĕрлетĕр пӳрт.
Килпуçĕ йăттăр алтăра:
Кĕрекене
туссем васкаччăр вăрçăран,
Аллисене
сарса кĕрейччĕр хапхаран.
Килменнине —
тăприйĕ çăмăл пултăр,
Ачисене —
çĕршывăмăр ашшĕ пултăр.
Çĕнтерне ятпала
праçник пуçлатăр халăх,
ташлатăр савăнмалăх,
пĕр çын ан юлтăр чаплă ĕçкĕрен.
Кайран каллех
вăл тыттăр мирлĕ ĕç-йĕре.

Поэт
   çапла ĕмĕтленет:
Çаплах эс пул,
   Çĕн Çул!

Туссем,
Йăласене хисеплесе,
черкке йăтар-и кĕçĕр?
Е кĕтĕç-и вĕсем?
Тăшманĕ сĕмсĕр.
Çук,
   черкке мар —
тăват кĕтеслĕ штык йăтар!

СТИХВАН ШАВЛЫ.

ПИРĔН ИРТНĔ ÇУЛТИ ĔÇСЕМ

1942 çул вĕçленчĕ. Пирĕн колхозсем ăна ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунипе паллă турĕç. Вăрçă условийĕсенчи йывăрлăхсене çĕнтерсе, колхозсем тырпул тухăçлăхне ӳстерчĕç.

Колхозлă ялăн пултарулăхĕ пысăк. Кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсенче вăл нихăçанхи пек мар уççăн курăнчĕ. Пирĕн ирĕклĕ пурнăçăн правине туртса илме вăрçăпа килнĕ тăшмана колхозниксем, колхозницăсем чĕререн кураймаççĕ.

Çĕрпӳ районĕнчи Анат Кипекçери «Ĕмĕт» колхозран нумай çынсем тăван çĕршывăн чыслăхĕшĕн çапăçма фронта кайрĕç пулсан та, колхоз кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ. Ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсене ăнăçлăн пуçтарса кĕртрĕ. 1942 çулта колхоз тырра нумайрах акса турĕ, хăйĕн уйхирĕнче çĕнĕ культурăсем ӳстерчĕ.

Тӳррипех каламалла, иртнĕ çулти çураки умĕн хăшпĕр колхозниксем кăçал колхоз ялхуçалăхĕнчи пур ĕçсене те ăнăçлăн туса пырасси çине шанман. Анчах колхоза ертсе пырас ĕçе фронтран аманса таврăннă коммунист Михаил Скворцов тăнă хыççăн, колхозниксем ĕçе пĕтĕм вăйран тытăнчĕç, пур ĕçсене те вăхăтра туса пырас шанчăк çирĕпленчĕ. Колхоз çуртыррисене 1 талăк хушшинче акса хăварчĕ, 116 гектар акмалла пулнă пулсан, 137 гектар çине акрĕ. Нумай колхозниксем кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Вĕсен хастарлă ĕçне пула колхоз 1942 çулта çуракине те, тырпулсене пухса кĕртес ĕçе те ăнăçлăн вĕçлерĕ, декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тырпулсене пĕтĕмĕшпех çапса пуçтарчĕ, государство умĕнчи обязательствăсене парса татрĕ.

Халĕ эпир 1942 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен итогне турăмăр. Япăх мар ĕçленĕ пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем. Тĕштырăсен тухăçлăхĕ вăтам шутпа кашни гектар пуçне 12 центнер пулчĕ. Уйрăм культурăсене илсен, вĕсен тухăçлăхĕ тата пысăкрах: пăрçа гектартан 18 центнер, ыраш—13,5 центнер, махорка 10-шар центнер, кантăр вăрри 12-шер центнер тухрĕ. Кунсăр пуçне колхоз тухăçлă пахча-çимĕç туса илчĕ.

Декабрĕн 18-мĕшĕнче колхоз правленийĕ колхозниксене аванс валеçсе пачĕ. Колхозра кăçал ĕçкунĕсен минимумне ĕçлесе тултарман колхозниксем пачах çук, стахановецсен хисепĕ ӳсрĕ. Александра Клементьева, Ангисия Константинова, Мария Иванова, Анфиса Гурьева колхозницăсем кăçал кашниех 200—320 ĕçкунĕнчен кая мар ĕçлесе илнĕ. Малтанлăха шутланă тăрăх, кашни ĕçкунĕ çине кăçал тырă 2,5—3-шер килограмм тухмалла.

Ялхуçалăхĕнчи ĕçсене хăвăрт пуçтарса кĕртессинче колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче агитациллĕ-ăнлантарулă ĕçе тĕплĕн тата куллен туса пыни пысăк вырăн йышăнчĕ. Пирĕн агитаторсем хăйсен ĕçне колхозниксемпе пĕрле ĕçлесе туса пычĕç. Вĕсем чылайĕш колхозницăсене ĕçре пример кăтартакансем пулчĕç. Учительница-агитатор Христина Шашкова юлташăн ĕçне илсе пăхар. Вăл тырă вырнă вăхăтра ялан колхозницăсемпе пĕрле пулчĕ, вĕсемпе пĕрле, вĕсемпе тан ĕçлерĕ. Талăкра вăл 90 тĕм тырă вырса пычĕ. Учительница-агитатор Анна Сидякова юлташ кăçал колхозра агитаци ĕçне куллен туса пынипе пĕрлех 174 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Агитаторсем колхоз активне вăйлатрĕç. Вăл актив колхоз председательне (вăлах партин колхозри организацийĕн секретарĕ) Скворцов юлташа пĕтĕм ĕçе лайăх йĕркелесе пыма пулăшрĕ.

1943 çул колхозсем умне тата пысăкрах задача кăларса тăратать. Тырпулăн тухăçлăхне малалла ӳстермелле, кăçал 1942 çултинчен нумайрах тырă акса тумалла. 1943 çулта пирĕн тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара апат-çимĕç продукчĕсем, хамăрăн промышленноçа çителĕклĕ таран чĕр-тавар туса памалла.

Пирĕн колхоз 1943 çулхи çуракине хатĕрленме тытăнчĕ. Вăрлăхсене эпир сортласа хунă, вĕсене акма юрăхлă кондицине çитернĕ. 5 сеялка, 24 плуг, 43 сӳре çуракине тухма хатĕр, вĕсене пурне те юсаса лартнă.

Кăçал пирĕн тĕштырăсем акмалли çĕр лаптăкне татах та сарма тивет. Техникăллă культурăсене 1943 çулта тата нумайрах акатпăр. Махоркăна 10 гектар çине, 12 гектар кантăр тата сахăр кăшманĕ лартса тăватпăр.

Тырпулсен тухăçлăхне ӳстерме агротехникăллă мероприятисене пурне те туса ирттеретпĕр. Уя 200 тонна ытла тислĕк кăларнă та ĕнтĕ. 50 гектар çине юр тытса хăваратпăр, техникăллă культурăсене апатлантарма 5 тонна минераллă удобрени илсе килетпĕр.

А. ЕФИМОВА,
ЧАССР Верховный Совечĕн депутачĕ.

Тăван çĕршывăн чысĕшĕн

Çĕмĕрле МТС-ĕн коллективĕ 1942 çула паха çитĕнӳсем тунипе паллă турĕ. Трактористсемпе комбайнерсем хăйсен пĕтĕм пултарулăхне хурса вăйлă тырпулшăн кĕрешрĕç. 1942 çулти ĕçсен результачĕ вĕсем фронта тивĕçлĕ пек ĕçленине кăтартса парать. МТС çулталăкри ĕçсен планне ирттерсе тултарчĕ.

Халĕ МТС-ра тракторсене юсас ĕç пырать. Сталин юлташ Чăваш республикинчи колхозниксемпе трактористсем танксен колоннисене тума 31 миллион та 552 пин тенкĕ укçа пухса пани çине ответлесе янă саламлă телеграммăна вуланă хыççăн МТС-ра митинг пулса иртрĕ. Трактористсемпе ремонт тăвакан рабочисем Сталин юлташăн саламĕпе хавхаланса, тракторсене кунĕн-çĕрĕн юсама тытăнчĕç. Декабрĕн 29-мĕшĕнче бригадăсем смена вĕçленнĕ хыççăн та киле каймарĕç, çĕрĕпех хĕрӳ ĕç пычĕ. Ирхине пĕр трактора юсаса кăларчĕç.

Тракторсене юсама детальсем çитмен. Трактористсемпе ремонт тăвакан рабочисем хăйсем хушшинче детальсем илме укçа пухас ĕçе пуçарчĕç. Кĕске вăхăт хушшинчех 2.000 тенкĕ пухса кирлĕ детальсене илсе килчĕç. Ремонт ĕçне малалла туса пычĕç.

МТС коллективĕ танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 244 пин те 900 тенкĕ укçа пухнă. Паллă тракторист-стахановец Семенов юлташ (вăл 1942 çулти ĕç планне 250 процент ытла пурнăçланă) танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 25 пин тенкĕ укçа пачĕ. Комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕ Михайлов юлташ та танксен колоннине тума 25 пин тенкĕ пачĕ.

— Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чысĕшĕн эпир нимĕн те шеллеместпĕр. Паян эпир тракторсемпе ĕçлетпĕр, кирлĕ пулсан танксем çине ларса тăшмана çĕмĕрсе пыма хатĕр,—теççĕ трактористсем.

Х. ЛИСИН.

Юр тытаççĕ

СОВЕТСКОЕ. 1943 çулхи тухăçлă тырпулшăн кĕрешӳ колхозсенче сарăлсах пырать. Халĕ нумай колхозсем уйра юр тытса хăвараççĕ. Шаптакри «Новая жизнь» колхоз 40 гектар çине, Якушкĕнчи колхоз 15 гектар çине, Исмендерти «Радио» колхоз 40 гектар çине тытса хăварнă. Çакăн пекех Суткӳлти «Восход» тата «Смычка» колхозсем те чылай юр тытнă.

Я. СИГАЙ.

Ют çĕршывсенче

Дон çинче нимĕçсемшĕн хăрушă пулса тăчĕ

ХĔРЛĔ ÇАР НАСТУПЛЕНИ ТУНИ ÇИНЧЕН АНГЛИ ХАÇАЧĔСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

«Ньюс кроникл» хаçатăн çар обозревателĕ Хĕрлĕ Çар наступлени туни çинчен çапла çырать: Совет ăнăçăвĕсен пахалăхĕ çинчен противник пăрахса хăварнă питĕ пысăк складсем тăрăх тата иртнĕ эрнере совет войскисем йышăнса илнĕ территорире пăрахса хăварнă йышлă материалсем тăрăх пĕлме пулать. Дон çинче нимĕçсемшĕн питĕ хăрушă пулса тăнă пирки иккĕленме кирлĕ мар, тет обозреватель.

«Дейли мэйл» хаçатăн çар обозревателĕ Лиддл Гард çапла çырать: стратеги енчен пăхсан, нимĕçсен лару-тăрăвĕ питех те хăрушланса пырать. Нимĕçсем хăйсен вăйĕсен чылай пысăк пайне хĕвелтухăçнелле инçене кĕртсе янă, çав вăхăтрах Хĕрлĕ Çар Германин тылне шаларах та шаларах кĕрсе пырать. Кунта илекен хыпарсем çапла шутлама май параççĕ: Германи войскисем халиччен пулман пек вăйран тухса тата шухăш-кăмăл енчен çав тери хавхаланса çапăçаççĕ. Вырăссен стратегийĕ, тăшмана пырса çапма меллĕ вăхăта лăпкăн кĕтсе тăни вĕсене халь пысăк ăнăçусем кӳрет. Хĕрлĕ Çар Германи командованийĕн планĕсене арпаштарса янă. Нимĕçсен лару-тăрăвĕ хăрушланни хăех курăнса тăрать.

«Йоркшир пост» хаçатăн çар обозревателĕ çакна кăтартса парать: гитлерла армисем, наступлени туса пыракан совет чаçĕсенчен таталса мала кайса ӳксе, малтан хатĕрлесе хунă оборона линийĕсен хӳтлĕхне пытанма пултараймарĕç. Нимĕçсен Сталинград патĕнче çавăрса илнĕ армийĕн лару-тăрăвĕ йывăрланнăçемĕн йывăрланса пырать, мĕншĕн тесен çав армие пулăшма пыракан войскăсене вырăссем каялла сирсе янă.

«Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат хăйĕн умстатьинче вырăссем снабжени тĕлĕшпе тĕлĕнмелле ĕç турĕç тесе çырать. Хаçат çакна палăртса парать: çакă вăл промышленноçпа ялхуçалăхне урăхлатса çĕнетнин результачĕ пулса тăчĕ, тет. Россия экономика тĕлĕшĕнчен хытă чĕтренсе ӳкмерĕ, мĕншĕн тесен противник тытса илнĕ е вăл тытса илес хăрушлăхра тăнă районсенчен куçарса кайнă предприятисем валли çĕршывăн хĕвелтухăç пайĕнче çирĕп производствăллă база пулнă. Промышленноçа çапла урăхлатнипе пĕрлех вăрçă пынă районсенче пур задачăсене те пурнăçламашкăн мĕнпур вăя мобилизациленĕ.

„Гитлеровецсем хĕлле канса илме шутлани пăчланса ларнă“

ИНДИРИ ХАÇАТСЕМ ХĔРЛĔ ÇАРĂН ĂНĂÇĂВĔСЕМ ÇИНЧЕН МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ДЕЛИ, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Индири хаçатсем Хĕрлĕ Çарăн вăрçăри ăнăçăвĕсене пысăк хак парса вĕсем çинчен нумай çыраççĕ. «Хинду» хаçат çапла çырать: нимĕçсем Сталинграда тытса илме хăтланни пĕтсе ларнă пирки вĕсен лару-тăрăвĕ халĕ питĕ хăрушă пулса тăчĕ. Нимĕçсем «Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районри фронт кĕскелчĕ» тени вăл вăрçăра пысăк поражени тӳснине йышăннипе пĕрех.

«Индиан дейли мэйл» хаçат каланă тăрăх, совет войскисем тăшмана Дон çинче тата фронтăн ытти участокĕсенче пырса çапни Хĕрлĕ Çар «çак хĕлле нацистсене ăшалантарассине» кăтартса тăрать.

«Трибюн» хаçат çапла çырать: совет войскисем наступлени тунă пирки гитлеровецсене питĕ хĕн пулса тăрать, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен вăйĕсене çĕнĕрен ура çине тăратма çак хĕлле усă курма шутлани пăчланса ларчĕ, хĕлле канса илесси нимĕçсен çар стратегийĕн пĕр паха пайĕ пулнăччĕ. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем наступлени туни татăклăн çĕнтересси патне пысăк утăм туни пулса тăрать».

ИТАЛИРИ ШИКЛĔ ШУХĂШ. КĂМĂЛСЕМ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Дагенс нюхетер» хаçатăн Римри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Италин ытларах та ытларах çыннисем шикленме тытăнаççĕ.

СТАМБУЛ, декабрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Италире правительствăна хирĕçле выступленисем ӳссе пынă пирки, фашистла ушкăнсенче шиклĕх вăйланать. Италири фашистсен пуçлăхĕсенчен пĕри—Видуссони, «Корьере делла сера» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, вырăнти властьсене халăха «çавăрса тăрассине» вăйлатма хушнă, Муссолинин органĕ — «Пополо д'Италиа» хаçат кăмăллă та ăнланулла пулма чĕнет.

Румынири «Акциуня» хаçат: бомбăсем пырса ӳкрахни Итали халăхне питех те сыхă кăратать, тесе çырать. «Итали умне, — тет хаçат, — пысăк хăрушлăх тухса тăчĕ».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторĕн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 53 84 п.

НТ 11658